Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

98 (7952) № * Эрне кун, 2011 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 2-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Тивӗҫӗмӗре чыслӑн пурнӑҫлӑпӑр

*Умра тӑракан кулленхи ыйтусене татса парассипе тимленӗ хушӑрах ҫитес вырсарни кун, раштав уйӑхӗн 4-мӗшӗнче, пирӗн пӗр ҫын пек пулса Раҫҫей Федерацийӗн Патшалӑх Думине тата Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне депутатсем суйлассине малти вырӑна кӑлармалла пулать. Ҫакна кашни ӗҫ коллективӗнчех ӑнланаҫҫӗ. Ҫав шутра Мӑн Сӗнтӗрти больницӑра та.*

*– Эпир суйлава пӗр ҫемье пек кайса хамӑр тивӗҫе пурнӑҫлӑпӑр. Суйлав пӗлтерӗшне пирӗнтен кашниех лайӑх ӑнланать. Районта пурӑнакан нумай суйлавҫӑна та эпир ҫапла тума чӗнетпӗр, – терӗ кӑнтӑрлахи уйрӑм ертӳҫи, мануаллӑ терапин аслӑ категориллӗ врачӗ Ю.М. Трофимов (сӑн ӳкерчӗкре – хыҫалта). Сывату физкультурин медсестри Нина Арефьевна Кузнецова, процедура медсестри Нина Аврамовна Амосова, массаж медсестри Светлана Васильевна Белова (сӑн ӳкерчӗкре сулахайран сылтӑмалла) та Юрий Михайлович сӑмахӗсене хирӗҫлемерӗҫ. «Суйлав вӑл – ҫӗр-шыв пӗлтерӗшлӗ пулӑм. Унта пӗр ҫын пек хутшӑнсан ҫеҫ эпир хамӑрӑн малашлӑха уҫӑмлатма пултаратпӑр», – терӗҫ вуншар ҫул сывлӑх хуралӗнче ӗҫлекен хӗрарӑмсем. Вӗсен сӑмахӗпе килӗшмесӗр тӑма ҫук.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Суйлав-2011



## Районӑн ҫитес ҫулхи бюджетне йышӑнчӗҫ

Лару

***Район пуҫлӑхӗн – депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗн 2011 ҫулхи ноябрӗн 22-мӗшӗнчи 15 № йышӑнӑвӗпе палӑртнӑ пекех, район шайӗнчи депутатсем хӑйсен черетлӗ 12-мӗш ларӑвне ноябрӗн 30-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче пухӑнчӗҫ. Пӗрле пухӑнса канашласа татса пама кун йӗркине кӗртнӗ ыйтусен пӗлтерӗшӗпе сумӗ пӗчӗк темелле мар. Кусем вӗсем чи малтанах Муркаш районӗн 2012 ҫулхи социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн прогнозӗ тата Муркаш районӗн ҫитес ҫулхи бюджечӗ ҫинчен.***

***Укҫа-тенкӗ ыйтӑвӗ вара нихӑҫан та ҫӑмӑллисен шутӗнче пулман. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ҫӳлте асӑннӑ ыйтусене татса парасси те депутатсене хӗрӳ калаҫӑва чӗнесси малтанах паллӑ пулчӗ.***

Районӑн 2012 ҫулхи экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн прогнозӗпе райадминистрацин экономика пайӗн пуҫлӑхӗ Эльвира Симакова паллаштарчӗ. Ыйтусем, сӗнӳсем пулмарӗҫ мар. Акӑ «Ударник» хуҫалӑх ертӳҫи Платон Давыдов пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенчи экономика лару-тӑрӑвӗпе интересленчӗ. Ытларах чухне халӗ ҫапла пулса тухать: мӗн чухлӗ продукци ытларах туса илетӗн, ҫавӑн чухлӗ ӑна вырнаҫтарма йывӑртарах. Туса илнинчен ытларах ӑна вырнаҫтарасси пуҫ ваттарать.

Районти тӗп больницӑн тӗп врачӗ Владислав Данилов больницӑсенчи койка вырӑнӗсем ҫине сӑмах ҫитсен вӗсен пӗтӗмӗшле шутне чакарманни пирки каларӗ. Сӑмах кунта пӗр йышшисене тепӗр йышшисемпе ылмаштарни пирки кӑна пулма пултарать. Калӑпӑр, талӑкӗпех выртакансем валли уйӑрнисене кӑнтӑрла кӑна выртмаллисемпе. Кунсӑр пуҫне уйрӑм ҫынсен килӗсенче йӗркеленӗ койка вырӑнсем те пур. Тухтӑрсем вырӑна пырса вӗсене сиплесе тӑраҫҫӗ.

Районӑн ҫитес ҫулхи бюджечӗ пирки район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Рената Ананьева каласа пачӗ. Ку тӗлӗшпе те калаҫакансем сахал мар пулчӗҫ темелле. Александр Сидюшкин депутат Муркаш лицейӗн ҫуртне ача сачӗ валли уйӑрас ыйтӑва татса париччен ытти пур енсене те тӗплӗн шута илмелли пирки каларӗ.

Налук инспекцийӗн пуҫлӑхӗ Александр Волков налуксемпе ытти тӳлевсем пухасси кирлӗ шайра пулманнине аса илтерчӗ. Парӑм 8 миллион тенкӗ ытла. Предприятисем хушшинче ҫулталӑк хушшинче пӗр пус укҫа куҫарманнисем те пур.

Юлашкинчен район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Юрий Иванов тухса каларӗ. «Йывӑр, ҫӑмӑл вара нихӑҫан та пулман. Мӗн пухса кӗртнине сая яма юрамасть»,– терӗ вӑл. Ертӳҫӗсем ку тӗлӗшпе хӑйсен ӗҫченӗсем умӗнче ҫирӗп ответлӑхра пулса тӑни пирки палӑртрӗ.

Халӗ ӗнтӗ районӑн умри чиккисене, малашлӑх тӗллевӗсене палӑртнӑ темелле. Депутатсем районӑн 2012 ҫулхи бюджетне тупӑшсем енӗпе 347 миллион та 298 пин те 200 тенкӗ, тӑкаксем енӗпе 353 миллион та 186 пин те 600 тенкӗ палӑртрӗҫ. Бюджет дефицичӗ 5 миллион та 888 пин те 700 тенкӗ. Каласа хӑвармалла: ҫитес ҫул валли палӑртнӑ бюджет тӑкакӗсен калӑпӑшӗнче вӗрентӳ ӗҫӗ-хӗлӗ валли уйӑракан сумма 70,3 процент.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Пурте – суйлава!

**Декабрӗн 4-мӗшӗнче эпир РФ Патшалӑх Думин тата ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗсене суйлатпӑр. 1 № Октябрь округӗпе (Муркаш ялӗ) депутатсен районти Пухӑвӗн тата 5 № Якаткасси округӗпе Чуманкасси ял тӑрӑхӗн Пухӑвӗн депутачӗсемшӗн сасӑлатпӑр.**

**Хисеплӗ ентешсем! Суйлава активлӑ хутшӑнар, тивӗҫлисемшӗн сасӑлар!**

**Суйлав участокӗсем 8 сехетрен пуҫласа 20 сехетчен ӗҫлеҫҫӗ.**

## Тав сӑмахӗ калатпӑр

Хисеплӗ Президентӑмӑр Михаил Васильевич!

Пире, ял ҫыннисене, эсир кашни кун тӗрлӗ района тухса халӑхпа тӗл пулса калаҫма, унӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашма вӑхӑт тупма пултарни савӑнтарать.

Ял ӗҫченӗсен чун-чӗре малашлӑхне, ҫынсен «пурнӑҫ йывӑҫне» – ратнисене пӗлме тӑрӑшни, халӑхӑн иртнӗ тапхӑрӑн паттӑр та мухтавлӑ ӗҫӗсене паянхи кунпа танлаштарма пӗлни хавхалантарать.

Продукци туса кӑларакан, юхӑнма пуҫланӑ предприятисене ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратма пултарни, сӑмахран, мӑйракаллӑ шултра выльӑх ӗрчетме тӑрӑшакан хуҫалӑхсене пулӑшни: «Ядринмолоко» тата «Вӑрнарти аш-какай комбиначӗн» таварӗсем Чӑваш Республикин пур районӗн лавккисенче сутӑнни, Шупашкар ҫумӗнчи бройлер ӗрчетекен предприятие ӗҫлеттерме тытӑнни, ялти хресчене ӗневыльӑх усрама тӳлевсӗр укҫа-тенкӗ парса пулӑшни савӑнтарать.

Ялта ҫурт-йӗр ҫавӑракансене пулӑшма, этемӗн сывӑ пурнӑҫне вӑрӑмлатас шухӑшпа районсенче физкультурӑпа спорт комплексӗсем уҫас тесе, халӑха таса шыв тата медицина пулӑшӑвӗ пултӑр, вӑрманпа парксене сыхласа хӑварас тесе нумай тӑрӑшатӑр. Виҫҫӗмӗш е ун хыҫҫӑнхи ача ҫуралнӑ ҫемьесене ҫӗр пин тенкӗ парса пулӑшма йышӑнни те – регион шайӗнчи ҫемьесемшӗн пысӑк укҫа.

Хӗрарӑмсем 40, арҫынсем 45 ҫул ӗҫленине тӗпе хурса «Чӑваш Республикин ӗҫ ветеранӗ» хисеплӗ ят параҫҫӗ. Ун пеккисем Чӑваш Республикинче 26 пин ҫын ытларах. Ку вӑл – пенси ҫумне уйӑхсерен тӳленекен хушма 980 тенкӗ тата ҫыхӑну пулӑшӑвӗсен 50% ҫӑмӑллӑх пулӗ. Ку халӑха, паллах, савӑнтарать.

Паянхи кун республика ертӳҫисен курӑмлӑ пулӑшӑвне туйнӑ май, ялти халӑх ҫурт-йӗре кирпӗчрен купалани, ял пуласлӑхӗ лайӑхланни, ҫамрӑксем ялтан тухса каяссине чакарма, пуш ҫуртсем сахалланма пуҫлассине кӗтме юрать. Халӗ хулара пурӑнакан ачасем ялти ашшӗ-амӑшӗ пурӑннӑ ҫуртсене ҫӗнетсе тирпей-илем кӳме пуҫларӗҫ.

Президентӑн кашни утӑмӗ – чӑн та, ҫын валли тата ҫыншӑн. Эпир паян ҫакна туятпӑр.

Вӑрҫӑра пуҫ хунӑ е аманса таврӑннӑ хыҫҫӑн килте вилнӗ аттесенчен пулӑшусӑр юлнӑ, 1933 – 1945 ҫулсенче ҫуралнӑ ачасене те республика пулӑшу паракан тыл ӗҫченӗсен шутне кӗртме тӑрӑшатӑр пулӗ тетпӗр.

Эпир хамӑр енчен эсир палӑртнӑ тӗллевсене пурнӑҫлама тӑрӑшӑпӑр.

Ҫапла пултӑрччӗ!

Алӑ пусса ҫирӗплететпӗр:

**Г.В. ВОЛКОВ,**
**Патӑрьел районӗнчи Алманчӑ ял тӑрӑх пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи старейшинӑсен канашӗн председателӗ,**
**А.А. ДРУЖИНИН,**
**Алманчӑ ялӗнчи ветерансемпе инвалидсен канашӗн председателӗ,**
**Л.Ф. ВАСЬКИН,**
**ЧР ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ тата 14 пенсионер алӑ пуснӑ.**

Ыран – Инвалидсен пӗтӗм тӗнчери кунӗ

## Хӳтлӗхшӗн, тимлӗхшӗн – тав

***Ҫак кунсенче «Сывлӑх» ФСК-ра Инвалидсен пӗтӗм тӗнчери кунне халалланӑ анлӑ пуху иртрӗ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ Л.Ю. ТАРАСОВА пухӑннисене район ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарчӗ.***

***– Районти хуҫалӑхсемпе организацисем май пур таран тӑрӑшаҫҫӗ, ӗҫ калӑпӑшне, кӑтартӑвне ӳстерессишӗн, район экономикине пуянлатассишӗн тимлеҫҫӗ. Уйрӑмах манӑн «Сеспель» организацие ырӑпа асӑнас килет, – терӗ пухӑннисене Лилия Юрьевна. Ҫавӑн пекех инвалидсене паракан ҫӑмӑллӑхсем пирки районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ Н.П. Петрова тата ыттисем калаҫрӗҫ, тӗрлӗ ыйтӑва сӳтсе яврӗҫ. Кунтах спорт ӑмӑртӑвӗсем ирттерессине йӗркеленӗ. Инвалидсем пурте пултарулӑхпа палӑрчӗҫ.***

***Ҫак кун пур ҫӗрте те инвалидсене халалласа йӗркеленӗ мероприятисем, калаҫусем пулса иртеҫҫӗ. Ҫакӑн пек тимлӗх вара инвалидсемшӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ. Эпӗ районти инвалидсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашма пӗтӗм Раҫҫейри инвалидсен обществин вырӑнти организацийӗн ертӳҫипе А.Н. НИКОЛАЕВӐПА калаҫрӑм.***

*(Вӗҫӗ 5-мӗш стр.)*

Поздравление

Уважаемая **Галина Венедиктовна**! От всего сердца поздравляем вас с замечательным юбилеем! Искренне желаем вам долгих лет жизни, успехов в вашем нелегком, но почетном труде и обычного человеческого счастья! Пусть в вашей жизни будут только легкие уроки и послушные ученики!

Вы нас учили мудрости и чести,
Вы поучали нас как в этом мире жить,
Советовали нам держаться вместе,
Вы учите нас как счастливым быть.
Мы благодарны вам за все те знания,
Которые вы дарите всегда.
И пусть сбудутся все ваши желания,
И оставайтесь вечно молода!

**С уважением выпускники 1993 года – 11 «м» класс.**



Муркашра пурӑнакан тата Муркаш райповӗнче 30 ҫул сутуҫӑра ырӑ ятпа вӑй хуракан хисеплӗ те тарават, кирек хӑҫан та пулӑшма хатӗр ӗҫтешӗмӗре – **Роза Валентиновна СЮТРУКОВӐНА** 50 ҫулхи юбилей ячӗпе чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Эсӗ юнашар пулнишӗн эпир савӑнатпӑр. Малашне тата телейлӗрех пурӑнма хӑвна та, ҫемйӳне те ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм ӗмӗр, тату пурнӑҫ сунатпӑр. Эсӗ ҫакна тивӗҫ.

**Салампа: «Центральный» магазинта пӗрле ӗҫлекенсем.**



Ҫатракасси ял тӑрӑхӗнчи Кашмашра пурӑнакан хаклӑ мӑшӑра, юратнӑ аттене, пиччене тата шӑллӑма, хисеплӗ тӑвана – **Валерий Александрович СОЛОВЬЕВА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ӗҫрен те, ҫынна пулӑшасран та пӑрӑнманскере тулли пурнӑҫ, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр та вӑрӑм килтӗр, чир-чӗр санран пӑрӑнса иртӗр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Раштав уйӑхӗн 5-мӗшӗнче Ярославка ялӗнче пурӑнакан юратнӑ аттепе анне, хӗрӗмпе кӗрӳ, ывӑлӑмпа кинӗм, аппапа йысна, йӑмӑкпа кӗрӳ, шӑллӑмпа кинӗм, пиччепе кинӗм, ҫывӑх ҫыннӑмӑрсем – **Елизавета Михайловнӑпа Николай Петрович НОВИКОВСЕМ** сумлӑ юбилейӗсене паллӑ тӑваҫҫӗ. Ҫак ятпа эпир вӗсене чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр.



Кӗркунне пек тулӑх пулччӑр ӗмӗрсем,
Чир мӗнне ан пӗлччӗр сывлӑхсем,
Тату пулччӑр ӗмӗр пурнӑҫсем,
Такӑр пулччӑр ялан ҫулусем.
Тав сире пуриншӗн те чунтан,
Эсир хаклӑ кӗмӗл-ылтӑнран,
Эсир пурри пире савӑнтарать,
Пурӑнма ялан вӑй-хал парать.

**Салампа: амӑшӗсем, ывӑлӗпе хӗрӗ, Максимовсен, Лянкинсен, Новиковсен, Воротниковсен ҫемйисем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

# «Коррупцие хирĕç пĕрле кĕрешмелле»

**Интервью**

***Халĕ, тӳрĕ кăмăллă мар çынсем ку чухнехи техникăпа тата технологисемпе усă курма пултарнă чух, коррупцие хирĕç кĕрешме питĕ кăткăс. Чăваш Енре коррупцие хирĕçле политикăн тĕп шăнăрĕ мĕн-ши? Çакăн пирки Чăваш Республикин юстици министрĕпе Надежда Викторовна ПРОКОПЬЕВĂПА калаçрăмăр.***

– Пирĕн принципиаллă задача – коррупципе кĕрешесси, – палăртнă РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев Федераллă Пухăва янă пĕлтĕрхи Çырăвĕнче. ЧР Президенчĕн Михаил Игнатьевăн позицийĕ те ку ыйтупа çирĕп. Чăваш Патшалăх Канашне янă «Çамрăксене шанмалла!» тата «Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн» Çырăвĕсенче республика Президенчĕ «Чăваш Ен халăхĕн коррупципе çыхăннă кашни çыннах ятран пĕлмелле. Шантаратăп: патшалăх укçи-тенкине вăрлакансем тĕлĕшпе манăн позици улшăнми çирĕп» тата «Пĕтĕм шайри влаç тытăмĕнче ĕçлекен тӳресен саккунсене пĕр пăркаланмасăр пăхăнмаллине палăртса хăваратăп» тенĕ. Коррупцие асăрхаттарасси тата унпа кĕрешесси, Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕсен ĕçĕ-хĕлĕн «тасалăхĕ», информаци уççăнлăхĕ – Чăваш Енре коррупцие хирĕçле политикăна пурнăçламалли тĕп çул-йĕр.

**– Саккунсене пур енлĕ хатĕрлесе çитерменни те коррупцие аталанма пулăшать тенине илтме пулать. Ку тĕлĕшпе малашне мĕнле тимлеме палăртатăр?**

– Чăнах та хăш-пĕр нормативлă право акчĕсене йĕркелесе çитермелле. Çапах та саккунсем, тĕпрен илсен, аван ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне Чăваш Енре çĕнĕрен хатĕрлекен тата йышăннă нормативлă право акчĕсем коррупцие хирĕçле экспертиза витĕр тухаççĕ. Ку экспертизăна республикăри ĕç тăвакан влаç органĕсем, проекта хатĕрлекенсем, прокуратура органĕсем, ЧР Юстици министерстви, РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи Управленийĕ ирттереççĕ.

Нормативлă право акчĕсене тата вĕсен проекчĕсене экспертиза тăвасси – çĕнĕ те кăткăс ен. Апла пулин те, ман шухăшпа, коррупцие хирĕçле экспертиза паян – нормативлă право акчĕсенче коррупциогенлă факторсем пуррине палăртмалли курăмлă техника меслечĕ. Чăннипе нормативлă право акчĕ практикăра мĕнле пурнăçланнине тимлĕх уйăрмалла. Çакă – экспертизăн тата пысăкрах шайĕ. Ăна ирттерме специалистсен, уйрăмах юристсен, пысăк квалификаци е ятарлă хатĕрлев пулмалла. Кунта, паллах, никама пăхăнман экспертсен – тӳрĕ кăмăллă граждансен – пулăшăвĕ кирлĕ. Шăпах ĕнтĕ вĕсем саккун положенийĕсем пурнăçра мĕнле ĕçленине пĕлтерни право акчĕсене улăштармалли çăл куç пулса тăрать.

Пĕлтерĕшлĕ тепĕр задача – саккунсене, право акчĕсене йышăнасси кăна мар, вĕсене пурте çирĕп пăхăнассине тивĕçтересси. Енчен те саккун пур енчен те аван, анчах вăл кирлĕ пек ĕçлемест пулсан, лайăх результат ан кĕт. Çавăнпа та Чăваш Республикин тата муниципаллă право акчĕсен коррупцие хирĕçле мониторингĕ питĕ усăллă механизм пуласса шанатăп.

Паянхи кун ЧР Юстици министерстви Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн правăпа усă курассин мониторингĕ çинчен калакан йышăнăвĕн проектне хатĕрлет.

**– Надежда Викторовна, коррупци ыйтăвĕсемпе граждансем мĕн шухăшланипе влаç кăсăкланать-и?**

– Паллах. Кунсăр пуçне граждансен шухăшĕ, сĕнĕвĕсем – влаç органĕсен коррупцие хирĕçле ĕçĕ-хĕлĕнче чи пĕлтерĕшли. Çак тĕллевпе Чăваш Ен Юстици министерстви обществăлла шухăш-кăмăла тишкерет, социологи тишкерĕвĕсене çулсеренех ирттерет. Вĕсем кăтартнă тăрăх çынсем, хăвăрт мар пулин те, коррупци обществăна аркатнине ăнланма тытăннă. Коррупцие чи вăйлă сивлекенсем – аслă ăру, уйрăмах пенси çулĕсенчи граждансем. Çакă вĕсем социаллă нормăсене унчченхи пекех хакланипе, ку ушкăнри çынсен тупăшĕ сахалраххипе çыхăннă. Ĕçлекен граждансем вара коррупцие паянхи пурнăçăн пĕр пайĕ пек йышăнаççĕ. Виçĕ çулхи статистика кăтартнă тăрăх социаллă статуспа çӳллĕрех граждансем коррупцие чăтăмлăрах йышăнаççĕ. Коррупци укçа-тенкĕ тата пурлăх тĕлĕшĕнчен пысăк тупăшлă çынсен привилегийĕ теме пулать.

**– Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕсенче коррупцие хирĕç кĕрешессипе мĕнле ĕç пурнăçланать?**

– Патшалăх влаç органĕсем – Чăваш Республикин Правительстви, Патшалăх Канашĕ, Тĕрĕслевпе счет палати, министерствăсем, патшалăх комитечĕсем. ЧР Министрсен Кабинечĕ хăйĕн ларăвĕнче нормативлă право акчĕсен проекчĕсене пăхса тухать, Патшалăх Канашĕ саккунсене, çав шутра коррупцие хирĕç кĕрешме хатĕрленисене те, йышăнать.

Асăнса хăвармалла, коррупцие хирĕç тăрас ыйтупа йышăннă право акчĕсен шучĕпе республика Атăл çи федераллă округра пĕрремĕш вырăнта. Тĕрĕслевпе счет палати вара – патшалăх укçи-тенкине тĕрĕс тăкакланине тата тĕллевлĕ усă курнине тĕрĕслекен орган.

ЧР патшалăх влаç органĕсене пĕтĕмĕшле илес пулсан, вĕсем пурте нормативлă право акчĕсен коррупцие хирĕçле экспертизине ирттереççĕ. Кунсăр пуçне вĕсенче патшалăх служащийĕсем служба йĕркене пăхăннине асăрхаса тăракан комиссисем туса хунă; патшалăх служащийĕсен хăйсен тата мăшăрĕсен, çула çитмен ачисен тупăшĕ, пурлăхĕ, куçман пурлăхĕ çинчен сведенисем обязательнăй майпа тăратмалла. Сведени паманнисем е тĕрĕс мар сведени тăратнисем тĕлĕшпе служба тĕрĕслевĕ ирттереççĕ, вĕсене дисциплинарлă явап тыттарма та, ĕçрен хăтарма та пултараççĕ.

Палăртас килет, коррупципе кĕрешес системăна лайăхлатас-çĕнетес тĕллевпе республикăра ЧР Президенчĕ çумĕнчи Координаци Канашĕ туса хунă. Чăваш Республикинче право йĕркине тивĕçтерессипе тимлекен Координаци Канашĕ те çак задачĕсене пурнăçлать.

**– Должноçри çынсем укçалла сутăннă пайăр тĕслĕхсем илсе кăтартма пултаратăр-и?**

– Маларах каларăм ĕнтĕ, республикăра патшалăх влаç органĕсенче ĕçлекенсем çак киревсĕр пулăмпа – коррупципе – кĕрешессипе пур енлĕн тимлеççĕ. Çак ĕçе право сыхлавĕн органĕсемпе пĕрле тачă çыхăнса пурнăçласа пыраççĕ.

Акă кăçалхи вунă уйăхра право сыхлавĕн органĕсем суда 109 уголовлă ĕç ярса панă: çав шутран 35 çын тĕлĕшпе ултав тунăшăн, 32-шĕ пирки ют пурлăха ярса илнĕшĕн е салатса пĕтернĕшĕн, 17-шĕ тĕлĕшпе должноç полномочийĕсемпе тĕрĕс мар тата ытлашши усă курнăшăн, 14-шĕ пирки взятка илнĕшĕн, 18 çын тĕлĕшпе взятка панăшăн. Чăваш Республикин прокуратури патшалăхăн гражданлă тата муниципаллă служба, коррупципе кĕрешмелли çинчен калакан саккунсене мĕнле пăхăннине палăртас тĕллевпе ирттернĕ тĕрĕслевсем вăхăтĕнче кăçалхи тăхăр уйăхра саккуна пăснă 2294 тĕслĕхе тупнă. Вĕсене пĕтерес тĕллевпе прокуратура работникĕсем 741 представлени çырнă. Вĕсене пăхса тухнă хыççăн должноçри 624 çынна дисциплинарлă, 94 çынна административлă майпа явап тыттарнă. Коррупципе кĕрешес ыйтусемпе суда 210 заявлени тăратнă.

**– Надежда Викторовна, Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене коррупцие хирĕçле экспертиза ирттерни, сирĕн шутпа, çителĕклĕ-ши, коррупципе кĕрешес енĕпе çĕнĕ мерăсем йышăнма кирлĕ мар-и?**

– Паллах, çителĕксĕр. Йышăнакан мĕн пур мерăсемпе пĕрлех чи малтанах пирĕн пурин те ачасене пĕчĕкрен, садикран, шкултан пуçласа, çак ырă мар пулăма чăтма çук туйăма вĕрентсе хăнăхтармалла. Çавăн пекех взяточник, коррупционер тĕлĕшпе савăнмалла мар условисем туса хумалла, калăпăр, вăл пĕтĕмпех – ĕçне, пурлăхне, хисепе – çухаттăр, ун вырăнне обществăра (пĕрле ĕçлекенсенчен, кӳршĕсенчен, юлташĕсенчен) сивлев илтĕр тата саккунпа килĕшӳллĕн явап тыттăр.

Çынсем патшалăх службинчи ĕç вырăнне çухатасран хăраччăр тата ăна хаклаччăр тесен патшалăх службин авторитетне хăпартмалла, патшалăхăн гражданла тата муниципаллă службӑн çирĕплĕхне тата тĕреклетмелле, информаци уççăнлăхне малалла аталантармалла тесе шутлатăп.

Республикăри нормативлă право акчĕсен экспертизине ирттерни коррупцие асăрхаттармалли ытти мелсемпе, саккунсен çирĕплĕхĕпе пĕрле кăна усăллă пулĕ. Çакăнпа пĕрлех республикăн нормативлă право акчĕсенче управлени процесне кăткăслатакан, пурлăх илме хăтланма, взятка илме майсем туса паракан нормăсем пулмалла мар.

Ӳсĕм никĕсĕ – пĕтĕм шайри влаç органĕсемпе граждансем коррупци тĕслĕхĕсене асăрхаттарассипе, коррупци пулăмĕсене пĕтерессипе пĕрлешсе тăрăшни.

# Ыйтусене тĕрĕсех хускататăр

**Çыру йĕрĕпе**

Нумаях пулмасть Муркашри кирпĕч завочĕпе çывăх вырнаçнă Восточная урамра пурăнакансем коллективлă çырупа тухрĕç. Кунта пурăнакансен «Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа татса парайман ыйтусем сиксе тухнă.

Пĕрремĕш проблема вăл – çынсене шывпа тивĕçтересси. Акă мĕн çыраççĕ Восточная урамра пурăнакансем: **«Шыв башни кирпĕч завочĕн балансĕ çинче. Шыв мĕн чухлĕ пĕтернине кура Муркашри кирпĕч завочĕ ертсе пыракан компание счет тăратать. Вăл вара ку суммăна пирĕнтен, çакăнта пурăнакансенчен, пуçтарать. Анчах та трасса çинче пăрăх шăтса кайнă вырăнсем пур пулас. Çавна май шыв нумай тăкакланăшăн харпăр хăйĕн счетчик кăтартнинчен те ытларах тӳлеме тивет. Ертсе пыракан компани ертӳçи Н. Любимов шучĕпе пăрăх шăтса кайнă вырăна та пирĕнех шыраса тупмалла, техникине, материалĕсене те илсе килмелле, юсав ĕçĕсене те хамăр шутпах туса ирттермелле имĕш.**

**Кăçал çу кунĕсенче те ертсе пыракан компанипе кирпĕч завочĕ пĕр чĕлхе тупайманнипе шыв çуккипе сахал мар асаплантăмăр.**

**Тепĕр проблема – электроэнерги. Трансформатор та, шыв уçламалли башня пекех, кирпĕч завочĕн балансĕ çинче. Завод ноябрь уйăхĕн вĕçĕнчен тытăнса çитес çу кунĕсемччен производствăна чарса лартасшăн. Паллă ĕнтĕ, трансформатора та чараççĕ. Анчах та ку вăл никама та интереслентермест пулас. Пĕтĕм урамра пурăнакансен электроэнергисĕр мĕн курса тăмалла? Вăл шыв мар вĕт, ăна çырмаран бидонпа сĕтĕреймĕн...».**

Çавна каласа хăварасшăн. Вырăна тухса чылайăшĕпе калаçусем ирттертĕмĕр. Асăннă урамра пурăнакансем шывпа усă курнăшăн тӳлевсене парса татсан завод ертӳçи шыв парассине чарса лартмастăп тесе шантарчĕ.

Сӳлте асăннă йышши ыйтусем хальхи вăхăтра Восточная урамра пурăнакансен кăна тесен йăнăш пулĕччĕ. Паллă ĕнтĕ, çулла шыв пулманни тĕрĕсех тарăхтарать.

Восточная урамра пурăнакансен асăннă ыйтăвне çулла пĕр вăхăт татса панăччĕ, харпăр хăйсен шыв счетчикĕсене вырнаçтарнăччĕ. Çапах та башньăран мĕн чухлĕ шыв илнипе çынсем шывпа пĕтĕмпе мĕн чухлĕ усă курнин кăтартăвĕсем расна. Çавăнпа та нормăран ытлашши усă курнă шыв виçине кашни çын çине пайласа шутласа панă. Çак пайласа панă шыв виçин шутĕнче хăшĕпĕри хăйсен пахчисене шăварса тăни те пулĕ. Н.В. Любимов палăртнă тăрăх хальхи вăхăтра вара башньăран илнĕ шыв виçипе унпа çынсем усă курни хушшинчи уйрăмлăх çукпа пĕрех.

Электроэнерги тĕлĕшпе те çынсем ыйтусем хускатаççĕ. Электричество кирпĕч завочĕ урлă килет. Каçхи вăхăтра электроэнергие стандартпа пăхнă пек нормăпа илеймеççĕ. Мĕншĕн тесен çĕрлехи вăхăтра электроэнергие «вăрлакансем» те пур пулас. Мĕншĕн-ха çак «кукăр алăсене» пĕрле тытма, тивĕçлĕ органсене пĕлтерме тăрăшмалла мар? Вырăнти ыйтусене ытларах хамăрăн, пĕрлехи вăйпа татса пама тăрăшмалла вĕт. Электроприборсемпе тĕрĕс е тĕрĕс мар усă курнине палăртма инженерсем вырăна тухса тĕрĕслевсем ирттерĕç.

Хальхи вăхăтра Восточная урамра пурăнакансене шывпа тивĕçтерессин тата электроэнерги парса тăрассин проекчĕсене хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Кирпĕч завочĕ хĕллехи вăхăтра ĕçлеме чарăнсан та çынсене шывпа тата электроэнергипе тивĕçтерме пăрахмĕç. Çапла шантарчĕ кирпĕч завочĕн исполнительнăй директорĕ Юрий Иванович Петров.

Юлашкинчен çавна кăна каласа хăварасшăн. Декабрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн сирĕнпе пĕрле РФ Патшалăх Думин тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйламалла пулать. Апла пулсан пурте суйлава активлă хутшăнар, хамăр сасăсене чăннипех те пирĕншĕн тăрăшакансемшĕн, пирĕн ыйтусене ăнланакансемшĕн парар.

**Н. НИКИТИН,**
**Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.**

**4 декабря – единый день голосования**

# Предвыборная кампания: честный диалог или игра без правил?

**Выборная кампания вышла на финишную прямую. В воскресенье жители Чувашии отдадут свои голоса в пользу той или иной партии, выберут курс, по которому будет двигаться современная Россия.**

**Между тем, специалисты констатируют - год от года выборы становятся все более агрессивными, свидетелями чего являемся и мы с вами: переполненные листовками и газетами почтовые ящики, пикеты, ночные звонки, суть которых сводится к одному - дискредитировать соперника.**

4 декабря нам предстоит сформировать два парламента - России и Чувашии - на пятилетний срок. И это накладывает на политическую борьбу особый отпечаток – некоторые партии и кандидаты не гнушаются «грязных» технологий, идут «ва-банк», полагая, что в деле агитации хороши все средства. Добрая половина из более чем 230 жалоб и обращений в республиканский Центризбирком и в МВД по Чувашии касаются недобросовестной предвыборной агитации.

«В борьбе за электорат некоторые партийные деятели подчищают свои биографии, скрывают имущество и стараются всеми средствами извозить в грязи соперников. А к традиционной критике и многочисленным обещаниям прибавились методы совсем недозволенные. И речь сегодня уже идет не только о передергивании фактов, фальшивой подтасовке и агрессивном вранье – в ход пущены методы совершенно неприличные», - отметил на прошедшей пресс-конференции председатель ЦИК Чувашии Александр Цветков.

Глава Центризбиркома привел в пример случай, произошедший в Новочебоксарске, когда к распространению листовок привлекли детей, что категорически запрещается законом, а наиболее ретивый соискатель даже прибегнул к фотошопу и завалил электронные ящики СМИ, государственных и муниципальных органов фотографиями, описать которые не хватит приличных слов.

Кстати, этот же кандидат еще в прошлом году на выборах в городское собрание депутатов применил этот метод против своего соперника и именно такими неприличным методом прошел в представительный орган. Сейчас он решил повысить свой депутатский статус тем же способом.

Касаясь ответственности кандидатов, следует отметить, в первую очередь, ответственность самих избирателей. Если граждане, видя методы работы борца за депутатский мандат, все же отдают ему свой голос, они должны понимать, что и в законодательном органе такой «народный избранник», скорее всего, будет занят решением личных вопросов или спать, что наглядно демонстрирует печально известный ролик, имеющий широкое хождение в Интернете.

Аналитики подчеркивают еще одну особенность нынешней кампании: лидеры отдельных политических партий проявляют свою неуверенность, часто меняя свое мнение и бросаясь из крайности в крайность. Так, чтобы возбудить негативные чувства в жителях Новочебоксарска, придумана версия про перенос мусорной свалки под стены города, начат сбор подписей за отмену строительства технологичного полигона под ТБО. Между тем, именно этот полигон поможет решить существующую в республике проблему мусора, отмечает Председатель думского Комитета мо международным делам Константин Косачев: «Строительство этого предприятия – не дополнительная нагрузка на Новочебоксарск, но, если хотите, большая удача, поскольку полигон, который там предстоит возвести – это предприятие мирового уровня. Это те самые высокие технологии, которые могут работать, в том числе, и при переработке мусора».

СМИ Чувашии неоднократно писали о лидерах двух партий, которые в разгар предвыборной кампании подали свой голос в защиту руководства скандальной управляющей компании «Новэк» и руководства группы компаний «Савва», по чьей вине обанкротился ряд предприятий республики, приостановлено возведение объектов долевого строительства. Такой шаг идет вразрез с их лозунгами о защите прав граждан, обманутых дольщиков.

Чаще всего «грязные» методы агитации используют приезжие политтехнологи, которых больше волнует финансовая выгода. Поэтому они готовы на любые средства, лишь бы подзаработать на выборах. Правда, нынче чувашские полицейские сработали оперативно и уже нашли автора рассылки неприличных фотографий. Так что отвечать горе-кандидату придется по всей строгости закона. Два уголовных дела возбуждены по фактам незаконной агитации, составлены 22 протокола об административных правонарушениях, 17 дел рассматриваются в судах Чувашии и России. Десятки заявлений находятся на стадии проверки компетентными органами.

Чем ближе день голосования, тем больше разгораются страсти. Оглянувшись назад, можно вспомнить историю, когда кандидат-правоборец за сутки до выборов выбросил на головы граждан газету тиражом миллион двести тысяч экземпляров, то есть практически по номеру на каждого жителя республики. Теперь он снова среди соискателей депутатского мандата, и снова готов на любые средства ради главной цели - водворения себя в парламенте. Так что, извлекая из своего почтового ящика очередную листовку с неприличным содержанием, хорошенько подумайте: стоит ли ей доверять.

Традиционно накануне и в день голосования нас ждет еще одно искушение: подкуп голосов. Каждый ли устоит перед таким соблазном, неизвестно: полицейские обещали усилить контроль на территории избирательных участков. Я же, идя на выборы, буду держать в голове старую поговорку о том, что каждый народ заслуживает своего правительства. Честное и ответственное голосование - это дело наших рук. И от того, какой выбор сделаем мы, будет зависеть и дееспособность законодательных органов Чувашии и России.

**М. ВАСИЛЬЕВ.**

# «Ачасемшĕн тăрăшасси – çемьери тĕп ĕç»

## Район судĕнчен

**«Ачана тивĕçлĕ воспитани паманшăн ашшĕне е амăшне ашшĕ-амăш правинчен хăтарма пултарассине илтнĕ. Район хаçатĕнче те кун пек тĕслĕхсем пирки вуласа пĕлетпĕр. Ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтармалли сăлтавсем пирки саккунра мĕн çырнă-ши? Тĕплĕнрех пĕлсен аванччĕ».**

**Редакцие шăнкăравланинчен.**

***Вулаканăн ыйтăвне уçăмлатса парас тĕллевпе эпир Муркаш район сучĕн председателĕн пулăшаканĕпе Илья Николаевич ЗАХАРОВПА курса каласрăмăр.***

**– Илья Николаевич, саккун тăрăх ашшĕ-амăшĕн правинчен мĕнле сăлтавсене пула хăтарма пултараççĕ?**

– Ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтармалли сăлтавсене Раççей Федерацийĕн Çемье кодексĕн 69 статйинче палăртнă. Сăлтавĕсем çапла: ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçлассинчен пăрăнни, вăл шутра алимент тӳлессинчен пăрăнни те; ача çуратмалли больницăран (уйрăмран) е тата сиплев, воспитани, социаллă хӳтлĕх паракан тата çакăн евĕр ытти учрежденирен хăйсен ачине шута хумалли сăлтавсăрах илсе каймаççĕ пулсан; ашшĕ-амăш тивĕçĕсемпе йĕркесĕр усă кураççĕ пулсан; ачисемпе хăйсене хаяр тытсан (вĕсене çапнихĕнени е психика тĕлĕшпе сиен кӳни, ар çыхăнăвне кĕме ирĕксĕрлени); ашшĕн е амăшĕн алкоголь чирĕ вăраха кайнă е вĕсем наркомансем пулсан; ачисен е мăшăрĕн сывлăхĕпе пурнăçне хирĕç преступлени тунă пулсан.

**– Ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарассине суд татса парать. Район судĕнче кун пек йышăнусем нумай тума тивет-и?**

– Ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарма ашшĕ-амăшĕнчен пĕри, прокурор тата çул çитменнисен прависене хӳтĕлекен органсемпе учрежденисем ыйтма пултараççĕ. Асăннă категорипе çулсеренен сахал мар ĕç пăхса тухма тивет: 2009 çулта акă 7 ĕç тишкернĕ пулсан, 2010 çулта – 10 ĕç. Çак хисеп пирĕн районшăн пысăк тесе шутлатăп. Ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарнисем пурте тенĕ пекех хăйсен ачисене укçа-тенкĕпе пурлăх енчен пулăшу паман. Хăш-пĕр тĕслĕхсенче ашшĕпе амăшне иккĕшне те ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарнă.

Пăхса тухнă ĕçсенчен акă мĕн курăнать. Ытларах чухне ашшĕ-амăшĕ эрех-сăрапа иртĕхни, ниçта та ĕçлеменни, пурăнмалли вырăна таса мар, тирпейсĕр тытни, ачасем валли çимелли тата тăхăнмалли пулманни çакăн патне илсе пырать те.

Акă судри пĕр тĕслĕхре çул çитмен икĕ ача хăйсен ашшĕпе амăшĕ ниçта та ĕçлеменнине, пĕрмай эрех ĕçнине, вĕсене яланах кӳрентернине каласа пачĕç. Хăш чух сивĕ пӳртре те ларма тивнĕ вĕсен – хутса ăшăтман. Киле ют арçынхĕрарăм час-часах пырса çӳренĕ. Унтах – вăрçса-хирĕçни те. Ӳсĕр ашшĕ вара килтен тухса таракан амăшне шырама ачисене кăларса янă. Çакна чăтса пурăнакан ачасем пуç ыратнипе аптăрама пуçланă, сывлăхĕ хавшак пулнăран ачасем тăн çухатса ӳкни те пулнă.

Пĕр ачи хăйĕн çине алă хума та шутланă. Вĕсем ашшĕпе амăшĕ патне таврăнма килĕшменнине пĕлтерчĕç. Çак сăмахсене ачасенчен илтме питĕ йывăр.

**– Саккунпа ашшĕ-амăшĕн правине тавăрма пулать-и?**

– Каламалла, ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарнисен ача тĕлĕшпе право юлмасть, анчах та вĕсен алимент тӳлес явап тухса тăрать. Суд йышăнăвĕ хыççăн тепĕр ултă уйăхран ачана урăх çын усрава илме пултарать (усыновление, удочерение). Çак тапхăрта ашшĕпе амăшĕ юсанса хăйсене ашшĕ-амăшĕ пулма тивĕçлĕ шайра кăтартса пама ĕлкĕрсен вĕсем çухатнă правăна тавăрма суда заявленипе тухма пултараççĕ. Çав ултă уйăхра ачана урăх çын усрама илнĕ пулсан ашшĕ-амăш правине малтанхи ашшĕ-амăшĕ нимĕнле майпа та тавăрма пултараймасть.

**– Кун пирки сирĕн пата иск тăратни пулнă-и?**

– Ашшĕ-амăш правине каялла тавăрма ыйтса çырнă иск тăрăх юлашки ĕç 2009 çул пуçламăшĕнче çеç пулнăччĕ. Хăвăрах куратăр, шел пулин те, юсанас-тӳрленес текенсем çукпа пĕрех. Ашшĕ-амăшĕ ачисем çине алă сулни вара пĕтĕмĕшле çул çитменнисем преступлени тăвасси çине пысăк витĕм кӳрет. Ашшĕ-амăшĕ ачисене йĕркеллĕ пăхса тăнă пулсан çул çитменнисем тĕлĕшпе пуçарнă ĕççене сахалрах пăхса тухма тивĕччĕ.

Акă кăçал март уйăхĕнче çул çитмен ача эрех ĕçнĕ хыççăн хăй паллана çынна темиçе хут çĕçĕпе тирнĕ (çынни сурансене чăтаймасăр вилсе кайнă) пирки пуçарнă ĕçе пăхса тухма тиврĕ. Ашшĕ-амăшĕ кăтартакан тĕслĕхсенчен вĕренеççĕ ĕнтĕ ачасем. Кăçал хăйпе пĕрле пурăнакан арçынна (сожитель) çĕçĕпе тирнĕ хĕрарăм тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе суд тишкерчĕ. Çав хĕрарăм – сакăр(!) ача амăшĕ – маларах та судпа айăпланнă. Апла пулин те йĕркесĕр пурăнать. Унăн аслă виçĕ ачи те суд тенкелĕ çинче пулса курма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ.

**– Суд тенкелĕ çинче ачасем сайра-хутра çеç пулмаççĕ эппин?**

– Çул çитменнисем йĕркене пăснă тĕслĕхсем нумайлансах пыраççĕ. Пĕлтĕр район сучĕн ачасем тĕлĕшпе пуçарнă 8 ĕç пăхса тухма тивнĕ пулсан, кăçалхи тăхăр уйăхра кăна – 15 ĕç. Апла ку таранччен пурнăçланă ĕçсем эффективлă пулманни куç кĕрет. Çакă çул çитменнисемпе ĕçлессине пур енлĕн вăйлатмалли пирки калать.

Çул çитменнисем тĕлĕшпе пуçарнă ĕççене район судĕнче пур фактора шута хурса тарăннăн тишкереççĕ. Суд хăйĕн ĕçĕнче воспитани тата профилактика енĕ пысăкрах витĕмлĕ пултăр тесе те тăрăшать. Судăн уçă ларăвĕсене аслă классенче вĕренекенсене те чĕнетпĕр. Акă кăçал çуркунне çапла Муркашри лицейра вĕренекенсем суд ларăвĕнче (çул çитмен ача тĕлĕшпе) пулса курчĕç.

Куратпăр ĕнтĕ, преступлени тăвасси çемьеренех пуçланать. Çавăнпа та пурне те çемье сумне çӳле хăпартма тăрăшмаллине ыйтса калас килет. Ачасемшĕн тăрăшасси, вĕсен воспитанине тивĕçлĕ шайра тытса пырасси – çемьери тĕп ĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**


На производства в Москву и Московскую обл. требуются:
ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ
Питание, проживание и служебный транспорт – **БЕСПЛАТНО**. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 25 000-35 000 руб.
Тел.: 8(8352)29-80-30. 3-3.

ОКНА
(по цене от 2000 руб. за кв.м)
БАЛКОННЫЕ РАМЫ
(по цене от 1700 руб. за кв.м.)
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ В С.МОРГАУШИ:
МОСКИТНЫЕ СЕТКИ, ОТКОСЫ, ПОДОКОННИКИ, ОТЛИВЫ И КОЗЫРКИ, МОНТАЖНЫЕ МАТЕРИАЛЫ
КРЕДИТ И РАСРОЧКА
ПЕНСИОНЕРАМ СКИДКА
5100
ВЫЕЗД ЗАМЕРЩИКА ПО РАЙОНУ БЕСПЛАТНО!
Прием заказов: Офис: с.Моргауши, ул.Гагарина, д.2
Цех: с.Моргауши, ул.Гагарина, д.16а
8(917)662-71-65, 8(927)668-89-42

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 44-50.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль
ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 6-10.

6 декабря с 12-00 до 13-00 часов
в Моргаушском доме Культуры
радуга звуков СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
заушные, карманные (пр-во Россия)
Цена от 4500 до 7000 руб. (запчасти)
ЦИФРОВЫЕ (пр-во Дания, Германия)
Цена от 8000 до 12000 руб. Подбор
Имеются противопоказания
Необходимо консультация специалиста
Ультразвуковые стиральные машинки
Цена от 1900 до 3500 руб.
Товар сертифицирован. Гарантия. Скидки
ВЫЕЗД СПЕЦИАЛИСТА НА ДОМ БЕСПЛАТНО
Справки по тел.: 8-901-866-81-57.
св-во 304183133700096 от 25.03.2004 год, г. Ижевск.



Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.
Тел.: 62-3-80. 2-10.


| | пятница 2 декабря | | | | суббота 3 декабря | | | | воскресенье 4 декабря | | | | понедельник 5 декабря | | | | вторник 6 декабря | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -6 | -6 | -6 | -8 | -7 | -7 | -6 | -5 | -3 | -1 | 0 | -1 | -1 | 0 | +1 | 0 | +1 | +1 | +1 |
| Давление мм | 752 | 752 | 752 | 753 | 753 | 750 | 748 | 748 | 747 | 746 | 746 | 746 | 743 | 740 | 742 | 745 | 744 | 743 | 742 |
| Влажность % | 89 | 89 | 73 | 91 | 85 | 85 | 75 | 80 | 91 | 94 | 83 | 88 | 91 | 96 | 84 | 87 | 92 | 92 | 82 |
| Ветер м/сек | С 2 | С 1 | Ю-З 1 | Ю 1 | Ю-З 4 | Ю-З 7 | Ю 7 | Ю-З 6 | Ю-З 7 | Ю-З 7 | Ю-З 6 | Ю 6 | Ю 7 | Ю-З 9 | Ю-З 6 | Ю-З 4 | Ю 6 | Ю-З 8 | Ю 7 |
| Солнце восход/заход | | 09:00 | 16:23 | | | 09:02 | 16:22 | | | 09:04 | 16:22 | | | 09:05 | 16:21 | | | 09:07 | 16:20 |
| Луна восход/заход | | 13:06 | - | | | 13:19 | 00:59 | | | 13:33 | 02:10 | | | 13:47 | 03:21 | | | 14:04 | 04:31 |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления


Продаю автомобиль LADA 111930 «Калина» компл. «Норма», новая, без пробега. Цена договорная, дешевле, чем в автосалонах. Куплю автомобиль до 10 000 руб. (с документами). Тел.: 8-927-856-95-00.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец.
Тел.: 8-905-342-39-43. 9-13.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-12.

* * *

Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 10-10.

* * *

Работа и дополнительный доход. Возраст и образование значения не имеют.
Тел.: 8-927-850-18-58, 8-960-310-01-29. 4-5.

* * *

Продаю стиральную машину (автомат) новую, в упаковке. Тел.: 8-905-028-60-03.

* * *

Февраль уйăхĕнче улттăмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-906-134-85-08.

* * *

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.


***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270601:57, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:270601, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6100 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:261, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 584 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270801:97, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:270801, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:140501:892, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:140501, для сельскохозяйственного производства, площадью 9996 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:263, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для огородничества, площадью 305 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.


В кафе «Автомиг» (ООО «Заря») требуется официантка. Тел: 8-903-066-22-17. 2-2.

В консалтинговую компанию «Виктория» требуется бухгалтер (для работы в с. Моргауши). Требования: женщина до 40 лет, образование – высшее экономическое, знание «1 С бухгалтерия», опыт, ответственность, обучаемость. Обязанности: обслуживание клиентов. Режим работы: полный рабочий день. Заработная плата: 10 000 руб. Резюме на E-mail: vika09-2010@mail.ru. Факс: 8(8352)22-10-60. Контактный тел.: 446-448 (сот.). 2-5.

В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб.
Тел.: 36-42-92, 36-42-94, 8(8352)57-21-63. 1-5.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб.
Установка, гарантия.
Тел.: 8-905-345-77-19. 9-12.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-5.

Компания продает анионовые прокладки, подгузники и защитные средства от электромагнитных и радиационных излучений. Тел.: 8-927-850-18-58. 9-10.

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
• стабильный доход
• возможность пополнения и частичного снятия
ЗАЙМЫ НА ЛЮБЫЕ ЦЕЛИ
• на ремонт и подготовку к зиме
• для пенсионеров
ЛЬГОТНЫЕ УСЛОВИЯ
• на покупку и строительство жилья под МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8 900 333 0001



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1Ĕ5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 01.12.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4364.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.